Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

74 (7391) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ĕç çи – 2006

## Юлашки гектарсем çинче

***Районти 6 пĕрлешӳллĕ хуçалăхра вырма ĕçĕсене вĕçленĕ***



***«Ударник» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн кăçалхи кĕрхи уй-хир ĕçĕсен калăпăшĕ пĕчĕк мар. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 1800 гектара яхăн лаптăк çинчен пухса кĕртмелле. Çак вăхăта вырма ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ ĕнтĕ. Тухăç та вăтамран гектар пуçне 24 центнера яхăн.***

***Ытти ĕçсене те манăçа хăвармаççĕ. 400 гектар кĕрхи культурăсем акса хăварма пăхнă пулсан, 300 гектара яхăн кĕр аки irттерме ĕлкĕрнĕ.***

***Черетре вара – çĕр улми. Вăл 310 гектар йышăнать. Ăна та вăхăтра тата пахалăхлă пухса илме палăртаççĕ хуçалăхра.***

***Сăн ӳкерчĕкре: агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ Ф.Ф. Григорьева Вăрманкасси уйрăмĕнчи малта пыракан комбайнерсене саламлать.***

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇСЕМ СЕНТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (вырса çапниничен, процентпа). 3. Кашни гектар пуçне тивĕçекен тухăç (центнерпа). 4. Кĕрхи культурăсем акнă (процентпа). 5. Çĕртме сухи тунă (гектарпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 50 | 54 | 13 | 31 | 50 |
| “Волга” | 90 | 14 | 15 | 44 | 75 |
| “Восток» | 100 | 90 | 20 | 129 | 120 |
| «Герой” | 100 | 47 | 15 | 0 | 100 |
| ЗАО “Агро-Урожай” | 100 | 100 | 19 | 0 | |
| К. Иванов яч. хис. | 63 | 50 | 11 | 18 | 32 |
| Ильич яч. хис. | 100 | 63 | 22 | 60 | |
| “Колос” | 45 | 0 | 9 | 0 | |
| Ленин яч. хис. | 60 | 54 | 15 | 60 | 180 |
| “Лидер” | 46 | 79 | 15 | 0 | 45 |
| “Нива” | 100 | 100 | 16 | 30 | |
| “Оринино” | 100 | 86 | 18 | 33 | 63 |
| “Передовик” | 73 | 10 | 10 | 35 | |
| “Свобода” | 85 | 88 | 20 | 62 | 145 |
| “Сеятель” | 58 | 94 | 15 | 15 | |
| Суворов яч. хис. | 88 | 42 | 18 | 39 | |
| ООО АФ “Рассвет” | 81 | 51 | 18 | 82 | 260 |
| ОАО АФ “Нива” | 69 | 33 | 11 | 15 | |
| “Ударник” | 88 | 56 | 24 | 73 | 155 |
| “Хлебороб” | 68 | 78 | 11 | 31 | |
| Чапаев яч. хис. | 78 | 47 | 19 | 60 | |
| «Чемеево» | 70 | 46 | 20 | 0 | |
| Чкалов яч. хис. | 71 | 100 | 18 | 140 | 40 |
| **Районĕпе** | **76** | **58** | **16,9** | **41** | **1265** |

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем

## Малти ретре

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче вырма ĕçĕсен хĕрӳ тапхăрĕ: уяр çанталăкăн кашни кунĕ-сехечĕ ылтăнпа тан. Çавăнпа та çак вăхăтра ĕç çине тимлĕх уйăракансем уйрăм хисепре. Вĕсене чыслама кĕрхи ĕçсенче ятарлă конкурссем йĕркелени пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кăçал çак ăмăрту “хир карапĕсемпе” ĕçлекенсем тата çĕртме сухи тăвакансем хушшинче пырать. Ĕç пĕтĕмлетĕвĕ – кашни эрнере. Конкурса пăхса тăракан комисси пĕтĕмлетĕвĕпе августăн 21–28-мĕшĕсенчи тăрăшулăхпа ДОН-1500 комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта – “Агро-Урожай” агрофирмăри Юрий Павлович Егоров экипажĕ (200 тонна, 200 тенкĕ валли свидетельство). Виççĕмĕш вырăнта (139 тонна, 100 тенкĕ свидетельстви) “Ударник” хуçалăхри Алексей Владимирович Степанов.

“Енисей” комбайнсен класĕнче пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене никама та паман. Виççĕмĕш вырăна 100 тонна тырă çапса тĕшĕлесе “Волга” чикĕллĕ яваплăхлă обществăри Андрей Федорович Пайков экипажĕ тивĕçнĕ (100 тенкĕ свидетельстви).

СК-5 “Нива” комбайнсен класĕнче пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта “Нива” чикĕллĕ яваплăхлă обществăри 200 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ Алексей Петрович Петров. Виççĕмĕш вырăнта вара “Сеятель” хуçалăхри Николай Меркурьевич Ванюшкин экипажĕ. Вĕсем 101 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Асăннă экипажсем 200 тата 100 тенкĕ свидетельствисене тивĕçрĕç.

## Сухара маттур

Çĕртме сухи тăвакансен августăн 21–28- мĕшĕсенчи ĕçĕсемпе ДТ-75 класлă тракторсем хушшинче (эрнери ĕç норми 50 гектар) “Рассвет” агрофирмăри Александр Васильевич Морозов çĕнтернĕ. 51 гектар çĕртме сухи тунăскер “2006 çулта çĕртме сухи тăвакан чи лайăх механизатор” куçса çӳрекен вымпела тата 300 тенкĕ укçа свидетельствине тивĕçрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене никама та паман.

Çĕртме сухинче Т-150, Т-150К, МТЗ-1221, ВТ-100 тракторсемпе ĕçлекенсем хушшинче (ĕç норми 75 гектар) пĕрремĕш вырăнта “Свобода” хуçалăхри Василий Михайлович Соловьев механизатор. Вăл асăннă тапхăрта 75 гектар сухалама пултарнă. Тăрăшулăх кăтартнă механизатор куçса çӳрекен вымпела тата 300 тенкĕ свидетельствине тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăнта “Рассвет” агрофирмăри Николай Валериевич Буронов (54 гектаршăн 200 тенкĕ свидетельстви). Виççĕмĕш вырăна никама та паман.

Сухара МТЗ-80, МТЗ-82 тракторсемпе ĕçлекенсем хушшинчи ăмăртура пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич Никитин (25 гектаршăн 200 тенкĕ свидетельстви). Виççĕмĕш вырăна никама та паман.

Республикăра

## Çар комиссариачĕсен йышĕ чакать

Иртнĕ эрнере Шупашкар хулинчи Калинин тата Ленин районĕсенчи военкоматсене пĕрлештернĕ.

Çĕршывĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2870 военкоматран 405-не хупнă. Çак ĕç Раççей оборона министрĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать.

Республикăра çак ĕçе малалла тăсаççĕ. Хĕрлĕ Чутайсем Етĕрнесемпе, Шăмăршăсем Патăрьелсемпе, Куславккасем Вăрмарсемпе, Красноармейскисем Çĕрпӳсемпе пĕрлешеççĕ.

Хальлĕхе Элĕк, Каçал, Муркаш, Елчĕк, Тăвай районĕсенчи военкоматсем сыхланса юлаççĕ.

Райвоенкоматсене хупнине çара каякансен йышĕ чакнипе ăнлантараççĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район админстрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи августăн 30-мĕшĕнчи 290 № йышăнăвĕпе «Свобода» хуçалăхăн çуртйĕрне комплекслă пăхса тăрас тата юсас енĕпе ĕçлекен рабочие **Виталий Васильевич ФЕДОРОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

«Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществин, «Муркашри кирпĕч завочĕ» тата «Моргаушавтотехсервис» уçă акционер обществисен коллективĕсем ыйтнине тивĕçтерсе, нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн çаксене район администрацийĕн пуçлăхĕн августăн 30-мĕшĕнчи 291 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

– **Любовь Пантелеймоновна ДЕНИСОВАНА,** Муркашри кирпĕч завочĕн садчикне;

– **Валерий Севастьянович МАКСИМОВА**, Муркашри кирпĕч завочĕн водительне;

– **Александр Германович ИВАНОВА**, «Моргаушская» строительство организацийĕн каменщикне;

– **Алексей Владимирович ИГНАТЬЕВА**, «Моргаушская» строительство организацийĕн мастерне;

– **Владимир Анатольевич СМЕЛОВА**, «Моргаушская» строительство организацийĕн водительне;

– **Людмила Поликарповна ИВАНОВАНА**, «Моргаушавтотехсервис» предприятин тĕп бухгалтерне.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

## ЧР Патшалăх Канашне депутата суйлама тăратнă кандидатсене, суйлав пĕрлешĕвĕсен представителĕсене пĕлме

**Тӳлевсĕр йĕркепе суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене пичетлеме пĕтĕмпе 1404 тăваткал сантиметр лаптăк уйăрнă.**

**Кашни кандидата 100 тăваткал сантиметр, кашни суйлав пĕрлешĕвне 140 тăваткал сантиметр тӳлевсĕр лаптăк тивĕçет.**

**Тӳлевлĕ йĕркепе суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене пичетлеме пĕтĕмпе 2808 тăваткал сантиметр лаптăк уйăрнă.**

**Шăпа туртнă кашни кандидата 351 тăваткал сантиметр, кашни суйлав пĕрлешĕвне 468 тăваткал сантиметр тӳлевлĕ лаптăк тивĕçет.**

**Суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене вырнаçтармалли графика иртнĕ номерте пичетленĕ.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

Комисси ларăвĕнчен

## Хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалла

Инкеке никам та кĕтмест. Çакă хăех хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалли пирки калать. Кĕçнерни кун каç Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхăн йĕтемĕ вырăнĕнче çунăк купи çеç юлни çакна тепĕр хут çирĕплетрĕ. Шартлатса çунакан вут-çулăм каçхи тӳпене нумай хушă çутатрĕ. Явапсăрлăх акă, мĕн патне илсе çитерет иккен. Виçĕм кун чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен комисси ларăвĕнче шăпах çак инкек сăлтавĕсене тишкерчĕç.

– Хăрушсăрлăхшăн яваплă структурăсем, вырăнти специалистсем хăйсен тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă пулсан, çак инкек пулмасан та пултаратчĕ. Ку пĕрре. Сиксе тухнă çулăма чарассипе вăхăта сая ямасăр тимленĕ пулсан, инкек çак таранччен пулмастчĕ – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Халĕ лару-тăру мĕнле аталаннине тишкерер-ха. Вут-çулăм 20 сехетре тухнă. Инкек пирки тӳрех Муркашри пушар чаçне шăнкăравланă. Анчах вăл çитиччен вут-çулăмпа кĕрешме кунта çакна валли пушар сӳнтермелли пĕр хатĕр те пулман. 5 кубла метр калăпăшлă савăтра та шыв тĕпĕнче çеç пулнă. Ку мĕн çинчен калать? Вырăнти яваплă çынсем хăйсен тивĕçĕ çине пӳрне витĕр пăхни çинчен.

– Талăкĕпех дежурство тăраççĕ. Унта çакна валли 2 дежурнăй пур, - ăнлантарать ларура хуçалăх ертӳçи Н.В. Рудаков.

Кунта ыйту сиксе тухать: мĕн тăваççĕ вĕсем, енчен те мĕн те пулин сиксе тухас-мĕн пулсан, мĕн тумаллине пĕлмеççĕ пулсан? Пушар сӳнтермелли хатĕрсем çуккине, шыв савăчĕ типсе ларма пуçланине вĕсем те, специалистсем те, председатель хăй те курман-и вара ку таранччен? Пĕрремĕш пушар машинин шыв пĕтсе тепре тултарма кайнă хушăра пушар пушшех алхасма пуçланă. Ун чĕлхине чармалăх савăтра шыв пулманнипе, 2-мĕш пушар машини тӳрех килменнипе.

Госпожнадзорăн районти уйрăмĕн ертӳçи И.Н. Смирнов çакăн сăлтавне çапла ăнлантарать:

– Пĕр автомашина шăнкăрав хыççăн тӳрех пушар сӳнтерме кайрĕ, теприне пушар чаçне техслужащине чĕнсе иличчен хăварма тиврĕ, мĕншĕн тесен пушар чаçĕ – стратегиллĕ объект. Никамсăр хăварма юрамасть.

Йывăрлăхсем паян нумай. Чăннипех те, вăл каланă пек, 2 сотрудника çăмăлах мар пуль пур объектсене те çитсе тĕрĕслеме. Оперативлă машина çукки те пысăк чăрмав кăларса тăратать. Анчах та паян сиксе тухнă ыйтусем мар вĕт çаксем. Мĕншĕн вĕсене тивĕçлĕ вырăнсенче маларах çĕклемен?

Юнашарта шатăртатса та шартлатса вут-çулăм алхаснă чух çакăн пек лару-тăру пулниpе ниепле те килĕшмелле мар. Иккĕмĕш пушар машини тухиччен çав 15-18 минутра районти пушар чаçĕпе инкек пулнă çĕрте нимĕнле çыхăну çукки ăнланмаллах мар пулĕ.

Вăхăтра юнашарти “Свободăн” пушар машини те кӳршĕсене инкекре пулăшма килĕшмен. Мĕншĕн тесен водитель руль умне ларма юрăхлă шайра пулман. Ку мĕн çинчен калать. Районти ытти хуçалăхсенче те пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни, вĕсене сĕмсĕррĕн пăсни çинчен. Ертӳçĕсем хăйсем ку ыйту çине çиелтен пăхни, çакăншăн яваплă специалистсенчен çирĕп ыйтманни çинчен.

Нумаях пулмасть рейда хутшăнакансем “Свободăра” пулса, унта та ку тĕлĕшпе тилхепене пушатнă тĕслĕхсемпе тĕл пулнă.

– Вырма хĕрсе пынă тапхăрта шыв савăчĕ унта та пушăччĕ, - пĕлтерчĕ ларура ЧР Гостехнадзор ертӳçи В.П. Дмитриев. Ертӳçĕсем пушар машинисене тытса тăрасшăн марри тĕлĕнтерет те, тарăхтарать те.

– “Лидер” хуçалăх ертӳçи куçранах çапла каларĕ: саккунпа килĕшӳллĕн тытса тăма та, пĕтерме те пултаратăп, терĕ мана, – терĕ Илья Николаевич ларура.

Пур япалана пĕтерме йывăр мар. Анчах хуçалăх объекчĕсем, пурăнмалли çуртсемпе çынсен пурнăçне пырса тивекен ыйту çине хуçалăх ертӳçи çак енчен пăхни никама та чыс кӳмест. Пушар машини çук вырăнсенче вут-кăвар тухмасть тесе шантарса калаятăр-и? Çук вĕт. Апла пулсан, ведомство пушар хуралĕсене сыхласа хăвармалли майсене тупмах тивет. Пурнăç çапла ыйтать паян. Этем совеçĕ. Яваплă вырăна çынсем шанса суйларĕç пулсан яваплăха туймалла пек.

– Мĕн тăвакĕ. Тахçанах срокран тухнă вăл напольнăй сушилка. Халь мĕн тăвас ĕнтĕ, - тет Е. Андреев яч. хис. хуçалăх ертӳçи Н.В. Рудаков ним пулман пек. Халь тин, чăнах, мĕнех тăвăн. Малтан шутламан пулсан. Çук, çук, тĕрĕс мар. Халь те пулать. Тивĕçлĕ мерăсем йышăнма. Урăх объектсенче, урăх кун пек инкексем ан пулччăр тесе. Ку пур хуçалăх ертӳçисемпе специалисчĕсене те пырса тивет. Комбайнсем çинче огнетушительсем пур-и? Йĕтем çинчи тырă типĕтмелли агрегатсем кăлтăксăр мар-и? Шыв савăчĕсем тулли-и? Каçхи хурал вырăнтах-и? Пушар машинин водителĕ стройрах-и? Ответлă ертӳçĕсен ыйтусем те нумай пулмалла. Хуравĕсем те тивĕçлисем кирлĕ. Мĕншĕн тесен чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен комисси ларăвĕнче çак правилăсене пăхăннине, вырăнти йĕркелĕхе контролессине çирĕплетме йышăнса хăварчĕç. Унсăрăн май çук. Мĕншĕн тесен пушар хăрушлăхĕ пысăк халь. Вырма вăхăтĕнче те, кайран та çапла пĕр самантлăха та манмалла мар. Хăрушсăрлăх нормисем пирки инкек пулсан çеç аса илес марччĕ. Вăл ан пултăр тесе кашни кун пăхăнасчĕ çав правилăсене.

**Л. ТУКТИНА.**